28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ОКТЯБРЬ
26
ЭРНЕКУН
208 (6959) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

## Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ воинсемпе вĕсен çемьисене пулăшасси

Большевиксен партийĕпе совет государстви, пĕтĕм совет халăхĕ Отечественнăй аслă вăрçăра Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ воинсемпе вĕсен çемьисемшĕн тăрăшассине чи пысăк та паха ĕç вырăнне хурса хисеплессĕ. Вăрçă пынă вăхăтра кăна мар, халĕ те, мирлĕ аталану тапхăрне куçнă хыççăн та, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемпе Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене пулăшасси Совет çĕршывĕнче хисеплĕ ĕç пулса тăрать. «Вăрçă инвалидĕсен умĕнчи хамăрăн пысăк тивĕçе эпир чыслăн пурнăçа кĕртĕпĕр», тесе В. М. Молотов юлташ каланине социализмлă çĕршыври ĕççынисем яланах асра тытса тăраççĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вăрçăра вилнĕ воинсен, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен, çар çыннисен çемьисене тата Хĕрлĕ Çартан киле таврăннисене памалли çĕнĕ çăмăллăхсем çинчен тата вĕсене материальнăй пулăшу парасси çинчен нумаях пулмасть ятарласа постановлени йышăнчĕ. Совет законĕсем тăрăх çар çыннисен çемьисене паракан çăмăллăхсем нумай енлĕ пулаççĕ.

Сăмахран, государствăран пособи илсе тăракан çар çыннисен çемьисене военнăй налог тÿлеттермеççĕ, çар çыннисен арăмĕсене пурне те ача-пăча çуккишĕн е сахал ачаллă пулнăшăн налог тÿлессинчен хăтараççĕ. Рядовой, сержант е старшина çемьисен хуçалăхĕсене, вĕсен çемьинчи ачасем 7 çула çитмен пулсан тата çемьере арăмĕсĕр пуçне вăй-питти çын урăх çук пулсан, вĕсене государствăпа ялхуçалăх продукчĕсем парассинчен пĕтĕмпех хăтараççĕ. Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăракан çынсен çемьисене хваттер енĕпе те пысăк çăмăллăхсем панă. Наркоматсемпе ведомствăсене çĕнĕрен тунă е юсаса йĕркеленĕ мĕнпур çуртсенчи хваттерсен 10 процентне вырăнти Совет исполкомĕсене пама хушнă. Çав хваттерсене вара Хĕрлĕ Çартан таврăннисене, çар çыннисен çемьисене, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене тата вăрçăра вилнĕ воинсен çемьисене вырнаçтармалла. Отечественнăй вăрçă фронтĕнче вилнĕ çынсен ачисене тата Отечественнăй вăрçăра аманса пĕрремĕш е иккĕмĕш группăри инвалид пулса юлнă çынсен ачисене вăтам шкулăн 8—10-мĕш класĕсенче, аслă шкулсенче тата техникумсенче вĕреннĕшĕн укçа тÿлеттермеççĕ.

Çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçăра аманса пĕрремĕш е иккĕмĕш группăри инвалид пулса юлнă çынсене тĕрлĕ таварсем парса пулăшас тĕлĕшпе те государство пысăк ĕçсем туса ирттерет. Сăмахран, Отечественнăй вăрçăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш группăри инвалидĕсем валли Чăваш республикинче III-мĕш квартал та 800 пин тенкĕлĕхе яхăн тĕрлĕ таварсем уйăрса панă.

Совет государстви çар çыннисен çемьисене паракан пулăшăва цифрăсем çине куçарса илсе пăхас пулсан, вăл пулăшăвăн хисепĕ темиçе миллиард тенке çитет.

Тĕрлĕ çăмăллăхсем памалла тунипе пĕрлех, пирĕн государство çар çыннисен çемьисем хăйсене тивĕç пулăшăва пĕтĕмпех илме пултарччăр тесе пур майсемпе те тăрăшать. Вăл ĕçе контроллесе тăрас задачăна правительство çар çыннисен çемьисене пулăшас енĕпе ĕçлекен отделсем çине хунă. Правительство йышăннă постановление пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе халĕ вырăнсенче çар çыннисене памалли çăмăллăхсене палăртса тухмалла. Чурачăк районĕнче, сăмахран, 11 ял Советĕнче палăртнă тăрăх, иртнĕ çулсемшĕн государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парассинчен 223 хуçалăха хăтармалла. Вăл шута вăрçăра вилнĕ çынсен 160 хуçалăхĕ тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен 63 хуçалăхĕ кĕрет. Çав районри 6 ял Совечĕ тăрăх 26 пин тенкĕ ялхуçалăх налогĕ тата 5 пине яхăн обязательнăй окладной страховани чакармалла. Çак ĕçе çывăхри вăхăтрах пĕтĕм республикипе туса ирттермелле, Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ воинсене правительство паракан çăмăллăхсемпе туллин усă курма май памалла.

Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ воинсемпе вĕсен çемьисене колхозсем, предприятисем ытти енĕпе те пулăшу парса пыраççĕ. Пирĕн республикăра октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне демобилизаци шучĕпе таврăннă çар çыннисене тата вăрçă инвалидĕсене 5424 кубометр вутă парса пулăшнă. Пĕр Калинино районĕнче кăна çар çыннисем валли 1500 кубометр вутă хатĕрленĕ, 375 кубометр турттарса панă.

Шăхасан районĕнче вăрçă инвалидĕсемпе фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕç лайăхланса пырать. 1945 çулхи 9 уйăх хушшинче фронтовиксен çемьисене 270 центнер тырă, 5907 килограмм çĕрулми парса пулăшнă. Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе Сурăм, Энтриял, Атнаш, Ямаш ял Совечĕсенче начар мар ĕçлеççĕ. Сурăмри «Заря» колхозра кăçал фронтовиксен, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен тата демобилизаци шучĕпе таврăннă çынсен 32 çемьине 90 пăт тырă парса пулăшнă.

Калинино районĕнче вăрçă инвалидĕсемпе фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлеме уйрăм строительство бригади организациленĕ. Çав бригада сентябрьпе октябрь уйăхĕсенче икĕ çурт çĕнĕрен туса панă, 63 кивĕ çурта юсанă. Ку районра демобилизаци шучĕпе таврăнакансене 16 ĕне-пăру, 113 сурăхпа сысна парса пулăшнă.

Советски районри «Звезда» колхоз упăшкасăр юлнă Козлова Марфăна çĕнĕ пÿрт лартса панă. Çавăн пекех «За коммунизм» колхоз Прохорова Феодосине çĕнĕ пÿрт лартса панă, ăшă тумтир тума çăм тата 200 тенкĕ укçа парса пулăшнă. Çак районрах фронтовиксен 230 çемьине 840 пăт тырă парса пулăшнă. Кун пек тĕслĕхсем ытти районсенче те сахал мар.

Анчах та фронтовиксен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пулăшас ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр районсенчи уйрăм колхозсенче ку ĕç çине чунсăррăн пăхни те палăркалать. Сăмахран, Çĕрпÿ районĕнчи «Политотделец» колхозра фронтра вилнĕ П. Григорьев ачисем япăх пурăннă пулин те, вăл ачасене колхозран вăхăтра пулăшу паман. «Поженары» колхозра 1945 çулта фронтовик çемьисемпе вăрçă инвалидĕсене пачах та пулăшман. Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ воинсен çемьисем çине çавăн пек чунсăррăн пăхни ытти хăшпĕр колхозсенче те палăрать. Çакăн пек çитменлĕхсене ниепле те тÿсме çук.

Пирĕн Совет çĕршывĕнче фронтовиксемпе вăрçă инвалидĕсен çемьисемшĕн тăрăшасси государство ĕçĕ, пĕтĕм халăх ĕçĕ вырăнĕнче хисепленсе тăрать. Фронтовиксен тата вăрçă инвалидĕсен çемьисене государство панă çăмăллăхсемпе пĕтĕмпех усă курма майсем памалла, фронтовиксемпе инвалидсен çемьисене пулăшас ĕçе пĕтĕм халăха ытларах та ытларах хутшăнтарса пымалла.

Вăрçă пынă вăхăтра Тăван çĕршыва хÿтĕлекенсен çемьисемшĕн тăрăшни Тăван Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшассин çур ĕçĕ пек хисепленнĕ пулсан, халĕ, Отечественнăй вăрçă çĕнтерÿллĕн вĕçленнĕ хыççăн та, вăл çавăн пекех пулмалла. Партин вырăнти кашни организацийĕн, ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен исполкомĕсен, предприятисемпе учрежденисен, колхозсемпе совхозсен— Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ воинсен çемьисемшĕн тăрăшса, вĕсене çителĕклĕ пулăшу парас тесе çине тăрса ĕçлемелле. Çакна тума пире аслă аннемĕр—Тăван çĕршыв хушать.

## СССР Верховный Советне суйламалли положенине вĕренеççĕ

СĔМĔРЛЕ. Районри парти организацийĕсем ертсе пынипе предприятисемпе колхозсенче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» вĕренес ĕçе тытăнчĕç. Ялсенче суйлав законне вĕренес ĕçе организацилеме урамсене десятидворкăсем çине уйăрнă. Суйлав Положенине çавăн пекех колхоз правленийĕсенче тата вулав çурчĕсенче вĕренеççĕ.

Суйлав законне ăнлантарас ĕç пуринчен ытла Ворошилов ячĕпе тăракан, «Молодая сила» т. ыт. колхозсенче те лайăх пулса пырать.

Комбинатра суйлав законне цехсемпе уйрăм сменăсем тăрăх вĕренсе пыраççĕ.

Партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене çак пысăк ĕçе тума пулăшас майпа, ВКП(б) райкомĕ колхозсене районри актива 30 çын янă.

**В. ЧЕРНОВ.**

### СУЙЛАВ ЗАКОННЕ ТĔПЛĔН ВĔРЕНЕР

Шупашкарти «Кожупряжь» артелĕнче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» ăнлантарас тĕлĕшпе 5 агитатор ĕçлет. Агитаторсем пурте коммунистсемпе комсомолецсем. Агитаторсем суйлав Положенине кашни цехрах ăнлантарса пама тытăннă.

Артельте Хĕрлĕ кĕтес пур. Унта Мускавра тата республикăра тухакан хаçатсем пурĕ 10 экземпляр килсе тăраççĕ. Суйлав законне пурне те ăнлантарас шутпа кунта суйлав Положенийĕ тухнă хаçатсен витринине тунă.

**Я. ЯКОВЛЕВ.**

### САВĂНĂÇЛĂ ВЕЧЕР

Çак кунсенче Шупашкарти кирпĕч заводĕнче ĕçлекенсен Хĕрлĕ Çартан таврăнакан воинсене кĕтсе илнĕ ятпа савăнăçлă вечерĕ пулса иртрĕ. Вечерта Хĕрлĕ Çартан таврăннă вунă воин пулчĕ. Вĕсем пурте фронта заводран тухса кайнă.

1941-мĕш çулта фронта кайнă Игошин юлташ вечерта çапла каларĕ:

— Эпĕ фронтра та хамăрăн завод çинчен шутлама пăрахмарăм. Тăшмана пуçĕпех çĕнтерĕпĕр те каллех тăван Шупашкара, хам нумай çул хушши ĕçленĕ завода таврăнăп, тесе шухăшласа пурăнтăм. Çак ĕмĕт халĕ пурнăçланчĕ: эпĕ каллех Шупашкарта, каллех хамăн тăван заводра. Нумай хут аманнипе сывлăхăм начарланнă пулин те, эпĕ производствăран уйрăлмастăп, каллех çак завода ĕçе кĕретĕп.

Игошин юлташ фронта кайиччен заводра нумай çул хушши ĕçленĕ. Вăл хăйĕн ĕç опытне çамрăк рабочисене пама, çамрăксене ĕçе вĕрентме ĕмĕтленет.

Фронтран таврăннă Пластинин юлташ та вечерта сăмах тухса каларĕ. Вăл киле таврăнни 3—4 кун çеç иртнĕ. Апла пулин те Пластинин юлташ канма шутламасть: заводра ĕçлеме тытăнса, тобарь пулма шутлать.

Фронтран таврăннă пур воина та завод дирекцийĕ ĕçе вырнаçтарчĕ. Завода хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлесе, çак вунă фронтовик пĕр кун хушшинче çĕрулмипе пахчаçимĕç хумалли овощехранилище туса пĕтерчĕç.

**З. СЕМЕНОВ.**

### ХĔРЛĔ ÇАРТАН ТАВРĂНАКАНСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

Калинино районĕнчи «Броневик» колхоза Хĕрлĕ Çартан таврăннă Л. Архипов, Н. Андреев, П. Егоров юлташсене колхоз 80-шар килограмм тырă парса пулăшнă. Çавăн пекех фронтовик çемьисене Д. Яковлевăна—30 килограмм тырă, 64 килограмм çĕрулми, 9 килограмм çăм, сысна çури; П. Игнатьевăна — 50 килограмм тырă, 12 килограмм çăм; Е. Васильевăна — 2 килограмм çăм, 300 тенкĕ укçа парса пулăшнă.

## Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

### Тăвай районĕ мĕншĕн кайра пырать?

Тăвай районĕ кăçал ялхуçалăх ĕçĕнче республикăра тăтăшах юлса пырать. Хальхи вăхăт тĕлне вăл государствăна тырă памалли планăн 3 пайĕнчен 2 пайне çеç тултарнă.

Районри малта пыракан «Новый путь», «Трудовой путь» тата ытти хăшпĕр колхозсем государствăна тырă парса татнă. «Новый путь» колхоз хăйĕн планне тултарнă хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне 100 пăт ытла тырă панă. Çав вăхăтрах «Комсомолец», «Красное Сормово», «Большевикла колхозшăн», «Коммунар», Киров тата Ворошилов ячĕсемпе тăракан колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе чăтма çук япăх ĕçлеççĕ.

Район кая юлса пынин тĕп сăлтавĕ вăл—район руководителĕсем колхозри ĕçе тĕрĕс организацилеме пĕлменни, лайăх ĕçлекен колхозсен опытне ытти колхозсене сарманни, колхоз ĕçне тума мĕнпур халăха явăçтарманни пулса тăрат. Акă, «Большевикла колхозшăн» колхозра талăкне 7—8 сехет хушши кăна авăн çапаççĕ, бригадирсем колхозниксем ĕçленĕ çĕре хутран-ситрен çеç пыркалаçа каяççĕ. кам мĕнле ĕçленине тĕрĕслемеççĕ, тунă ĕçе тивĕçлĕ пек йышăнмаççĕ. «Комсомолец» колхозра Заготзернон хатĕрлев пунктне уçнă, анчах та колхоз авăн çапас, çапнă тырра типĕтес ĕçе кирлĕ пек организацилеменнипе пула, кунта государствăна тырă парас графика тăтăшах пăсаççĕ.

Района лайăхрах ĕçлекен тăвас тесен, халĕ чи малтанах районри мĕнпур вăя колхоз ĕçне явăçтармалла. лайăх ĕçлекен колхозсен опытне пур колхозсене те сармалла, кашни колхозрах ĕçе йĕркеллĕ туса пыма кансĕрлекен чăрмавсене тĕпчесе вĕренмелле те вĕсене вăхăтрах сирмелле. ĕç дисциплинине, графика пăсакан çынсене ответ тыттармалла.

### Ĕçе юратакан ватă çынсем

ИШЛЕЙ. Кипечкасси ял Советĕнчи «Большевик» колхозри 70—80 çулхи колхозниксемпе колхозницăсем: Игнатий Смирнов, Роман Елахов, Федот Сурский, Петр Иваншиков, Агапия Пушкина тата Анна Каменева юлташсем колхозра ĕçлесе кăçал кашниех 100—180-шер ĕçкунĕ тунă.

— Ĕçлемесĕр ларма ăстан чун чăттăр-ха.—тет 76 çулхи Роман Елахов, 2-мĕш бригадăн паллă платникĕ.

Çак ватă çынсем Отечественнăй вăрçă çулĕсенче те колхозра тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем колхоз хуçалăхĕ тĕрекленсе пынишĕн хĕпĕртеççĕ.

Акă тата Сыпайкассинчи «Клевер» колхозри колхозница Лидия Озикова, 83 çула çитнĕ пулсан та, яланах ĕçе хутшăнать. 1945 çулта вăл 60 ĕçкунĕ тунă.

Колхозра тăрăшса ĕçлекен ватă çынсене пурте хисеплеççĕ.

**В. ЧИГАРКИН.**

### ĔÇ ДИСЦИПЛИНИНЕ ЯПĂХТАРНĂШĂН ТАТА ГРАФИКА ПĂСНĂШĂН СУД ТУНĂ

Шупашкар районĕнчи «Чăваш ЦИК» колхоз председателĕ И. Гончаров ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксене ĕçе хутшăнтарас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çавăн пекех колхоз государствăна тырă леçмелли графика та тăтăшах пăсса пынă.

Çавăн пек ĕçсем тунăшăн Шупашкар районĕнчи халăх сучĕ И. Гончарова 3 çуллăха тĕрмене хупмалла тунă.

### ÇАМРĂК ТРАКТОРИСТКА

Нина Егорова çамрăк хĕрача. Çавăн пекех вăл хăйĕн ĕçĕнче те çамрăк-ха.

Комсомолка Нина шкултан уйăрăлса трактор çине ларни те нумаях пулмасть. 1942 çулта кăна вăл ялти 7 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухса, малтанхи пĕлĕве илнĕ.

Нина шкултан вĕренсе тухнă вăхăтра пирĕн Тăван çĕршыв нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяррăн кĕрешнĕ. Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварас тесе, фронтрисем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă, тылрисем ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ.

Вăрçă пуçланнă хыççăн пурнăç йăлтах улшăннă. Пур çĕрте те пекех арçынсем вырăнне хĕрарăмсем ĕçлеме пуçланă.

Нинăн ашшĕ те вăрçă пуçланнă çулах фронта тухса кайнă. 1942 çулта Нина ашшĕ фронтра тăшмана хирĕç çапăçса геройла вилни çинчен йывăр хыпар илнĕ.

Çамрăк Нинăн пуçĕнче пуласлăх ĕмĕчĕсем пысăкчĕ. Вăл 7 çул вĕренмелли шкул хыççăн малалла вĕренсе пĕр-пĕр специалист пулма шутланă. Анчах фронтра ашшĕ вилнĕ хыççăн нумай ачаллă семье тăлăха тăрса юлни Нинăн ĕмĕтне татнă.

— Вĕренесси кая юлмĕ, çак йывăр вăхăтра ахаль ларма юрамасть: ĕçлес пулать, пĕтĕм халăхпа пĕрле фронтшăн усăллă ĕç тăвас пулать. Хăвăртрах çĕнтерÿ тума Хĕрлĕ Çара пулăшас пулать,—тесе лăплантарнă вăл хăйне хăй.

1943 çулта суркунне вара Нина Вăрнар МТС-ĕ çумĕнче уçăлнă трактористсен курсне вĕренме кĕнĕ. Преподаватель-механик курсантсене трактор мĕнле ĕçлени çинчен вĕрентнĕ. Вăл ăнланмалла мар тата халиччен илтмен çĕнĕ сăмахсем калаçа панă. Вĕренме çăмăлах пулман.

— Трактор—чĕрчун мар, тимĕр çеç. Ăна калаçа итлеттерме çук. Мĕнле ĕçлĕпĕр кунта?—тесе пăшăрханнă малтанхи кунсенчех Нина. Ытти вĕренекенсем те çавăн пекех шутланă.

Анчах Нина йывăрлăхсене çĕнтернĕ. Вăл трактора лайăх вĕренсе çитнĕ. Курсран вĕренсе тухнă хыççăн малтанхи çуракинче Нина плугарь пулса ĕçленĕ.

— Маттур, пултаратăн. Сана трактор шанса пама пулать,—тенĕ ăна бригадир.

Çураки хыççăн Нинăна бригадир хăй тĕллĕн трактористка пулса ĕçлеме трактор панă. Çавăнтанпа вăл чăнчăн трактористка пулнă.

Малтанхи çулах Нина ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартать. 1944 çулта Нина 300 гектар таран сухаласа хăйĕн çулталăкри планне 150 процент тултарать тата 705 килограмм горючи перекетлет. Ытти трактористсемшĕн вăл пример пулса тăрать, ĕçри юлташĕсем Нинăран вĕренме тытăнаççĕ, унран канашсем ыйтаççĕ. Кăçал вăл 171 гектар вырăнне 445 гектар сухаланă. 129 килограмм горючи перекетленĕ. Çавăн пек унăн ĕçне кăтартса паракан цифрăсем.

Нина Егорова халĕ Вăрнар МТС-ĕнче паллă та мухтавлă трактористка шутланса тăрать.

— Манăн юратнă ĕç—тракторпа ĕçлесси. Мирлĕ пурнăç пуçланнă май, эпĕ татах та хастарлăрах ĕçлеме пулатăп. Вăйлă тырпул туса илессишĕн, колхоз пурнăçне чечеклентерессишĕн пĕтĕм вăя хуратăп,—тет Нина халĕ.

**Е. ВОЛКОВ.**

### Ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ

МУРКАШ. Районри апат-çимĕç комбиначĕ ĕçлеме тытăннăранпа 3 уйăх кăна иртрĕ. Апла пулин те комбинат продукци туса кăлармалли плана уйăхран уйăхах ирттерсе тултарать. Комбинат сентябрь уйăхĕнчи плана 122 процент тултарчĕ. Сентябрь уйăхĕнче уйрăмăнах мальтоза тăвакан цех тухăçлă ĕçленине палăртмалла. Ку цехри Николаева работница уйăхри плана 125 процент тултарчĕ.

Халĕ комбинат коллективĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, ĕç тухăçлăхне кулленех ÿстерсе пырать. Комбинат октябрь уйăхĕнчи 20 кунри заданине 110 процент тултарчĕ. Хĕл вăхăтĕнче пĕр чăрăнмасăр ĕçлес тесе, кунта пур тĕрлĕ чĕртавара та çителĕклĕ таран хатĕрленĕ.

**И. ГРИГОРЬЕВ.**

### Хуçалăх çине тимсĕррĕн пăхакан çĕрте

КУСЛАВККА. Тĕмшĕрти корзинкăсем тăвакан «Комсомолец» артель чылайранпа ĕнтĕ производство планне тултарса пыраймасть. Иртнĕ çулсенче кунта артель юлса пынине мастер çуккипе ăнлантарса паратчĕç. Кăçал ĕнтĕ мастер та пур, анчах артель çаплах юлса пырать. Иртнĕ çул материалсем çителĕклĕ хатĕрлеменнине пула хĕлле пысăк чăрмавсем килсе тухнă. Çак йăнăшсене кăçал та шута илмен. Артель хăйĕн хуçалăхне хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе çак тарана çитсе те нимĕн те туман. Производство ĕçĕсене туса пыма артелĕн 2 çурт пур. Вĕсенчен пĕри, ăна вăхăтра юсаса тăман пирки, пĕтĕмпех юрăхсăра тухнă: кантăксене ватса пĕтернĕ, кăмакисене ишсе антарнă. Çавна пула рабочисем пĕр çуртĕнче кăна ĕçлеççĕ. Анчах ăна та пулин йĕркеллĕ тытмаççĕ. 19 куç кантăк ванчăк, урайĕсем çĕрсе шăтса пĕтнĕ, çурт çийĕнчен шыв анать, пĕр кăмаки юрăхсăра тухнă. Çуртсем çакăн пек япăхса кайнине пула артель правленийĕ хăйĕн канцелярине те яла куçарнă. Канцеляри артель мастерскойĕнчен инçе пирки, правлени работникĕсем артельте ĕçлекенсем патне хутран-ситрен кăна пырса каяççĕ. Ĕçлекенсене 5 уйăх хушши ĕçукçи тÿлемен.

Рабочисем хушшинче нимĕнле культмассăллă ĕç те çук. Ĕçлекенсен пухăвĕсем пачах та пулмаççĕ. Çавна пула рабочисен ĕç дисциплини ытла та япăхса кайнă. Рабочисем ĕçе тухнипе тухманнине, вĕсем кулленех мĕн чухлĕ ĕç тунине шута илсе, тĕрĕслесе пымаççĕ. Туса кăларакан продукцие тĕрĕс учета илсе пыман пирки, хăшпĕр чухне, рабочисем корзинкăсене хăйсемех сутса янă тĕслĕхсем те пур.

Райсовет исполкомĕн промышленность артелĕсене ертсе пырас ĕçе тăтăклăнах лайăхлатмалла.

**М. ОГОРОДНИКОВ.**

### „Сире çурт панă, юсăр, йĕркелĕр"

ЙĔПРЕÇ. Поселок Совечĕн исполкомĕ (председателĕ Смирнов) коммунальнăй çуртйĕрсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе ытла та çителĕксĕр ĕçлет. Поселокри пурăнмалли çуртйĕрсене темиçе çул хушши юсаман, вĕсене пĕтĕмпех юхăнтарса янă. Çуртсен тăррисем çĕрсе, шăтса пĕтнĕ. Йĕпе çанталăкра хваттерсене çаплах çумăр каять. Кăмакасем те чылайĕшĕ ишĕлсе анас пек лараççĕ. Коммунальнăй çуртра пурăнакансем поселок Советне кун çинчен темиçе хутчен те каланă, анчах Смирнов юлташа нимĕн те пăшăрхантармасть. Вăл хăй патне пулăшу ыйтма пыракансене яланах пĕр сăмахпа: «Сире çурт панă, юсăр, йĕркелĕр», тесе ответлет. Лесная урамра Хĕрлĕ Çар воинĕн Тимакин юлташăн тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕн Шибалов юлташăн çемьисем пурăнаççĕ. Ку çуртсене пĕтĕмпех юхăнтарса янă, кăмакисем хутма юрăхсăр.

Тÿрех каламалла, государство пурлăхне малашне те çакăн пек юхăнтарса пырассăн, Смирнов юлташăн ответ тыттармаллах пулать.

**П. КУРАКОВ.**

### ПИРĔН МАЛТАНХИ ÇИТĔНÿСЕМ

Эпир Ленин орденлĕ тата Кутузовпа Суворов орденĕсене илнĕ Хĕрлĕ Ялавлă Н-ски чăсри красноармеецсемпе офицерсем нумаях пулмасть орудипе, пулеметпа, минометпа, винтовкăпа тата автоматпа тĕл перес енĕпе ăмăрту туса ирттертĕмĕр. Çак ăмăртура мала тухнисен хисепĕнче чăвашсем те сахал мар. Акă, артиллеристсем: М. Антонов (Тимеш ялĕ, Елчĕк районĕ), Н. Баринов (Эскетен ялĕ, Çĕмĕрле районĕ), минометчик П. Афанасьев (Чалăм Кăкшăм ялĕ, Калинино районĕ), пулеметчик Д. Демьянов (Чăваш Тимĕш ялĕ, Йĕпреç районĕ), ручной пулеметчик Н. Федоров (Çĕн Мĕлеш ялĕ, Вăрнар районĕ), автоматчик В. Федоров (Пучинкe ялĕ, Йĕпреç районĕ), стрелок С. Лапшин (Виççĕмĕш Вăрманкас ялĕ, Çĕрпÿ районĕ) т. ыт. те тĕл персе боевой задачăна отлично пурнăçларĕç, командовани вĕсене тав турĕ. Вĕсем вăрçă теорине вĕренес тĕлĕшпе те малта пыраççĕ, хăйсен политикăллă пĕлĕвне хăпартас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. тăтăшах çĕнĕ хаçат-журналсем вуласа тăраççĕ.

М. Антоновпа С. Лапшин кĕçĕн командирсен шкулĕнче вĕренеççĕ, вĕренÿре пур предметпа та ăнăçлă пĕлÿ илсе пыраççĕ.

**Красноармеец Г. ЛЕВИН.**

## 10.000 библиотека

Октябрĕн 24-мĕшĕнче Мускавра облаçри культурăпа çутĕç секторĕсен библиотека начальникĕсен тата библиотека ĕçĕн облаçри методика кабинечĕсен заведующийĕсен канашлăвĕ хупăннă. Ку канашлура Мускав, Ленинград, Курск, Орел, Смоленск, Воронеж, Новгород, Вологда, Мурманск тата ытти облаçсен представителĕсем пулнă.

РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсен комитечĕн библиотека управленийĕн начальникĕ Усов юлташ хăйĕн докладĕнче каланă тăрăх, библиотекăсен хисепĕ халĕ вăрçăччен шая çитнĕ. Комитет системинче государствăн 10 публичнăй тата научнăй библиотеки, облаçсемпе крайсен тата республикăсен 60 библиотеки, округсен 14 библиотеки, хуласен 767 библиотеки, районсен 2.314 библиотеки, ялсен 6.047 библиотеки, ача-пăчасен 622 библиотеки пур. Пилĕкçуллăх планĕнче палăртнă тăрăх, районри библиотекăсенче кашнинче 10.000 кĕнеке, хулари библиотекăсенче 20.000 кĕнеке, ялти библиотекăсенче 3.000 кĕнеке тата ача-пăча библиотекисенче 15.000 кĕнеке пулмалла.

Канашлура çавăн пекех тата библиотекăсем харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшас ыйтăва сÿтсе явнă. Суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче библиотекăсем мĕнле ĕçлемелли çинчен канашлăва пухăннисене уйрăм консультаци панă.

## Наука кĕнекисем

Чăвашсен наукăпа тĕпчев институчĕ 1946 çулта пичетлесе кăларма чылай кĕнекесем хатĕрлет.

Институт хушнипе А. Л. Лукин хальхи вăхăтра Н. И. Ашмаринăн «Чăваш чĕлхи словарĕн» 17-мĕш (юлашки) томне пичете пама хатĕрлесе çитерет. Филологи наукисен кандидачĕ В. Е. Егоров «Чăвашсен халăхĕн литература чĕлхи» ятлă кĕнеке çырать.

Институтра ĕçлекенсем пуçламĕш шкулсем валли вырăсла-чăвашла словаре çĕнĕрен пăхса тухса 2-мĕш издани валли хатĕрленĕ. Çавнашкалах тата чăвашсен орфографи словарьне иккĕмĕш хут кăларма хатĕрлесе çитереççĕ. Ку тĕлĕшпе А. И. Иванов ĕçлет.

Кунпа пĕрлех, институтăн планĕ тăрăх филологи наукисен кандидачĕ С. П. Горский, А. И. Васильев чĕлхе ыйтăвĕсемпе çĕнĕ кĕнекесем çыраççĕ. Писатель Н. С. Тукташ чăвашсен паттăрĕсем çинчен калакан юмахсен пысăк сборникне хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлет.

## Вулав çурчĕсен ĕçне лайăхлатар

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Райисполкомсем çумĕнче культурăпа çутĕç учрежденийĕсен пайĕсене организациленĕренпе чылай вăхăт иртрĕ пулин те, районри вулав çурчĕсем хăйсен ĕçне çаплипех çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Районра 26 вулав çурчĕ пур, анчах вĕсенчен чылайăшĕ чăтма çук япăх ĕçлеççĕ. Мăн Хăмаркка ял Совечĕ çумĕнчи вулав çурчĕн заведующийĕ Огадерова юлташ вулав çурчĕ ялти культмассăллă ĕçĕн вучахĕ пулса тăнине ку таранах çитсе те ăнланса илмен. Вăл вулав çурчĕн ĕçне ялти актива явăçтарма тăрăшмасть. Тырпула уйăхиртен пуçтарса кĕнĕ хĕруллĕ тапхăрта та кунти колхозсенче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем пĕр номер та тухман, колхозниксем хушшинче политикăллă калаçусем ирттермеççĕ, хаçат-журналсем вуласа памаççĕ. Çавна пула ку ял Советĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата «Коллективист» колхозсем юлса пыраççĕ.

Хурашаш ял Советĕнчи вулав çурчĕ те (заведующийĕ С. Скворцов) хăйĕн ĕçне халăх ыйтнă пек туса пыраймасть. Ку ял Советне «Правда», «Чăваш Коммуни» тата «Красный партизан» колхозсем кĕреççĕ. Анчах [illegible] колхозĕнче те культмассăллă ĕçе тивĕçлипе организацилемен. Çав вăхăтрах Скворцов юлташ вулав çуртне кулленех хупă тăратать, час-часах базара сут тума кайса çÿрет. Ял Советри «Красный партизан» тата «Чăваш Коммуни» колхозсем, государствăна тырă парса татас тата авăн çапас ĕççене вăрахăн туса пыраççĕ.

Çавăн пекех Питĕнкасси, Серенкасси, Киватикасси ял Совечĕсенчи вулав çурчĕсем те япăх ĕçлеççĕ, массăллă-политикăллă ĕçе вăхăтран-вăхăта кăна туса пыраççĕ.

Районра авăн ĕçлекен вулав çурчĕсем те пур. Сурăм ял Совечĕ çумĕнчи вулав çурчĕ (заведующийĕ П. Илларионов юлташ) тырпула уйăхиртен пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра колхозсене пысăк пулăшу парса пычĕ. Вулав çурчĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçне план тăрăх туса пырать. Агитаторсем колхозниксене çĕнĕ хыпарсемпе вăхăтра паллаштараççĕ, вĕсене валли политикăллă калаçусем, докладсем тăтăшах ирттереççĕ. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Вулав çурчĕ пуçарнипе ял Советĕнчи пур колхозсенче те «Кăтарту хăмисем» тунă. Ку ял Советне кĕрекен колхозсем районра пур ĕçре те малта пыраççĕ. «Труженик» тата «Путь социализма» колхозсем тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕççене районра чи малтан вĕçлерĕç, вĕсем паян-ыран авăн çапса пĕтереççĕ.

Атнар ял Советĕнчи вулав çурчĕ те (заведующийĕ П. Ивантаев юлташ) хăйĕн ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Вулав çурчĕ хăйĕн ĕçне ялти активпа таччăн çыхăнса туса пырать. Çавăн пекех Ишеккассинчи тата Мăн Этменти вулав çурчĕсем те (заведующийĕсем М. Сатлайкинпа М. Дерюжин юлташсем) хăйсен ĕçне тивĕçлипех йĕркеленĕ. Ăçта вулав çурчĕсем авăн ĕçлеççĕ, ăçта политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек туса пыраççĕ, унта колхозсен ĕçĕ те ăнăçлăн пырать. Анчах çак чăнлăха районри культурăпа çутĕç учрежденийĕсен пайĕ (заведующийĕ П. Сорокин юлташ) ăнланса илмен пулмалла. Вăл вулав çурчĕсен ĕçне тĕпрен çĕнетсе урăхлатас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Кунта вулав çурчĕсен заведующийĕсене пухса канашлусем ирттермеççĕ, вĕсене пулăшса, кăтартса пымаççĕ. Сорокин юлташпа унăн инспекторĕ К. Михайлова юлташ вырăнсене тухса вулав çурчĕсен ĕçне пĕрре те тĕрĕслемен.

Халĕ пирĕн çĕршыв Совет государствин чи аслă органне—СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ тапхăрта вулав çурчĕсен ĕçĕ яланхинчен те лайăх пулмалла.

**П. ТИХОНОВ.**

*Суйлав законĕ çинчен пĕлсе тăма*

# 2. Пирĕн суйлавсене мĕншĕн пĕртан суйлавсем теççĕ?

СССР Верховный Советне пурне те тивĕç суйлав прави тăрăх суйлаççĕ терĕмĕр. Совет Союзĕнчи 18 çула çитнĕ граждансем (ăсран тухнă çынсемпе суда айăпласа суйлав правинчен хăварнă çынсемсĕр пуçне) пурте суйлава хутшăнма пултараççĕ. Çакăнпа пĕрлех пирĕн суйлавсене пĕртан суйлавсем тесе калаççĕ.

Мĕне пĕлтерет-ха вăл пĕртан суйлав тени?

Чи малтанах вăл акă мĕне пĕлтерет: Совет Союзĕнчи кашни гражданинăн суйлава хутшăнма пĕр сасă пур; пирĕн çĕршыври пур граждансем те пĕртан пулса суйлава хутшăнаççĕ. Арçын-и вăл е хĕрарăм-и, вырăс е чăваш-и, нумай вĕреннĕ-и е сахал вĕреннĕ,—кирек епле пулсан та кашни гражданинăн суйлавра пĕр сасăран ытла пулма пултараймасть.

— Урăхла епле пултăр-ха?—ыйту парĕ вулакан.

Ку ыйту çине çапла ответ парас пулать: чăн-чăн пĕртан суйлав прави пирĕн Совет Союзĕнче кăна пулма пултарать. Буржуаллă государствăсене илсен, вĕсен конституцийĕсенче пĕртан суйлав прави çинчен асăнса хăварнă пулин те, тĕрĕссипе илсен, çав принципа вĕсем яланах пăсаççĕ. Чылай çĕршывсенчи суйлав системи тăрăх, хăшпĕр суйлавçăсем пĕр суйлаврах икĕ-виçĕ сасă парса суйлава хутшăнма пултараççĕ: пĕрре вăл хăй пурăнакан çĕрти суйлав округĕнче суйлать, тепре—унăн промышленность предприятийĕ е суту-илÿ заведенийĕ вырнаçнă çĕрти суйлав округĕнче суйлать. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек йĕрке вăл капиталистсене, банкирсене, купецсене — пуянсемпе эксплоататорсене анчах усăллă. Вĕсем суйлавсенче пур майсемпе те хăйсен класне çиеле кăларасшăн тăрăшаççĕ.

Малалла: пĕртан суйлавсем тени суйлавсене пĕтĕм халăх пĕр пек хутшăнма пултарнине пĕлтерет. Сталинла Конституци çинче никĕсленсе тăракан пирĕн суйлав законĕ тăрăх, совет хĕрарăмĕсем СССР Верховный Советне арçынсемпе пĕртанах суйлама та суйланма та пултараççĕ. 1937 çулта суйланă СССР Верховный Совет депутачĕсен шутĕнче 189 хĕрарăм пулнă.

Буржуаллă çĕршывсенче пачах апла мар. Унта хĕрарăмсене государство ĕçне хутшăнтармаççĕ, хĕрарăмсем килти ĕçе кăна тума пултараççĕ, тесе шутлаççĕ.

Чылай çĕршывсенче, çарти çынсене суйлав прависĕр тăратса хăвараççĕ. Пирĕн çĕршывра Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флотĕнче тăракан çынсем, государствăри ытти граждансемпе пĕртанах, Верховный Совета суйлама та суйланма та пултараççĕ. Совет çĕршывĕнче рабочи те, хресчен те, ученăй та, çар çынни те, вĕсем мĕнле нацирен тухнине тата хĕрарăмпа арçынне пăхмасăрах, пĕртан сасăлама пултараççĕ.

Пирĕн суйлавсем пĕртан пулнине суйлав округĕсене епле туминчен те лайăх курма пулать. «СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 24-мĕш статьи тăрăх, Союз Советне суйламалли суйлав округне 300 пин çын кĕрет. Кашни суйлав округĕнчен пĕрер депутат суйлаççĕ.

Национальноçсен Советне те çавăн пекех пĕртан принципа шута илсе суйлаççĕ. Национальноçсен Советне СССР гражданĕсем союзлă тата автономиллĕ республикăсем тăрăх, автономиллĕ облаççемпе нации округĕсем тăрăх суйлаççĕ. Кашни союзлă республикăра — 25 суйлав округĕ, кашни автономиллĕ республикăра—11 суйлав округĕ, кашни автономиллĕ облаçре—5 суйлав округĕ, кашни нации округĕнче—пĕрер суйлав округĕ туса хураççĕ. Çав округсенче кашниннчех пĕрер депутат суйлаççĕ.

Ытти çĕршывсенче те суйлавсем округсем тăрăх пулса иртеççĕ. Анчах та суйлав округĕсене унта ĕççыннисен суйлав тивĕçне хĕсес, пуçпулса тăракан классене уйрăм çăмăллăхсем парас шутпа организацилеççĕ. Францири суйлавсен историйĕнчен çакă паллă: 12—15 пин çын пурăнакан сахал йышлă суйлав округĕ, унта капиталистсем пурăнаççĕ пулсан, рабочисем пурăнакан 100 пин çынлă пысăк округсем пекех пĕр депутат суйласа янă.

Российăри патша правительстви те ĕлĕк çавăн пекех хăтланнă. 1907 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче кăларнă суйлав законĕ тăрăх, Российăн Европăри пайĕнче 279 пин çын пуçне пĕр депутат суйланă пулсан, Çĕпĕрте кашни пĕр миллион çын пуçне пĕр депутат кăна суйлама пултарнă.

Çапла туни вăл пусмăрлакан классем рабочисемпе чухăнсене суйлавран пăрса хăварма тăрăшнине кăтартса парать.

Совет çĕршывĕнче суйлав законĕ пĕтĕм халăх интересĕсене хÿтĕлесе тăрать. Совет власĕ ĕççыннисен анлă массисене государствăна тытса тăрас ĕçе хутшăнтарма тăрăшать, государство власĕн чи аслă органне—СССР Верховный Советне суйлас ĕçе граждансене активлăн хутшăнса ирĕклĕн суйлама май парать. Çавăн пирки те эпир пирĕн совет демократийĕ—демократин чи аслă форми, пирĕн суйлавсем — пĕртан суйлавсем тесе калатпăр.

## Францири политика деятелĕсем суйлавпа референдум итогĕсем çинчен

**ПАРИЖ**, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио тĕрлĕ политика деятелĕсем суйлавпа референдум итогĕсем çинчен мĕн каланине пĕлтерет.

Францири коммунистсен партийĕн секретарĕ Жак Дюкло çапла каланă: «Пирĕн парти мĕн чухлĕ сасă илнĕ тĕлĕшпе çеç мар, тата Учредительнăй пухура мĕн чухлĕ вырăн илнĕ тĕлĕшпе те малта пыни Францире пĕр ĕçе те коммунистсемсĕр тума пултарайманнине кăтартса парать. Коммунистсем çĕршывшăн ырлăх тăвас ĕçре ответ тытассинчен хăрамаççĕ. Вырсарникун пулса иртнĕ суйлавсем çакна кăтартса параççĕ: Франци халăхĕ Францири коммунистсен партине пысăк вырăна хурать. Енер Франци хăйĕн патриотла шухăш-кăмăлне уçăмлăнах каласа пачĕ. Çĕршыва юсаса ура çине тăратас ĕçе прогрессиллĕ вăйпа ирĕклĕхĕн вăйне хутшăнтарас текеннисен нурин те çакна асра тытса тăмалла».

«Халăхăн республикăллă юхăмĕн» партийĕн лидерĕ Морис Шуман Франс пресс агентствин корреспондентне çапла каласа панă: «Суйлавпа референдум результачĕсем эпир кĕтнинчен те лайăхрах пулчĕç». Хăйсен партийĕн ăнăçлăхĕн сăлтавĕсене кăтартса панă май, Шуман çапла каланă: пирĕн парти де Голле çĕнĕ правительствăра та пуçлăх тума тăрăшать. Правительствăн пуçлăх ытларахăшĕ пирки тата хăйсен партийĕ правительство ĕçне мĕнле хутшăнасси пирки Морис Шуман нимĕнех те каламан, мĕншĕн тесен «пирĕн партин исполнительнăй комитечĕн ларăвĕ пулман-ха. Çав ларура вара эпир хамăрăн партин политикăллă çулйĕрне палăртса хума шутлатпăр», тенĕ Шуман.

Социалистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Мейер радио тăрăх çапла каланă: суйлавпа референдум итогĕсене социалистсем кăмăллаççĕ. Хальхи вăхăтра ĕлĕкхи организацисем çĕнтерме пултарайманни питех те паллă факт пулса тăрать, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен ĕçне кирлĕ пек çĕнетме пултарайман. Халĕ çапла шутлама пулать: Францири вăйсем çĕнĕлле улшăнса пĕр-пĕринпе пĕрлешрĕç, хальхи вăхăтра Францире виçĕ пысăк парти кăна пуçпулса тăраççĕ, хăйсен пĕлтерĕшĕ тĕлĕшпе вĕсем пĕртан вырăнах йышăнса тăраççĕ. Çав партисен шутне çаксем кĕреççĕ: социалистсен партийĕ, коммунистсен партийĕ тата «Халăхăн республикăллă юхăмĕн» партийĕ. Çав виçĕ парти çĕнĕ Пухура пуринчен ытларах вырăн йышăнчĕç. Вĕсем виççĕшĕ те нации пухăвĕн программине пĕтĕмпех хăвăртрах пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ.

### ФРАНЦИРИ ХАÇАТСЕМ ПРАВИТЕЛЬСТВĂРА КАМСЕМ ЫТЛАРАХ ПУЛАССИ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАÇÇĔ

**ПАРИЖ**, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Францири политикăллă ушкăнсем парламентра мĕнле партисем пĕрлешсе пысăкрах пай пулса тăрасси çинчен тата правительствăра хăш партин представителĕсем ытларах пуласси çинчен шухăшлаççĕ.

Социалистсен партине ертсе пыракансем çак тĕлĕшпе мĕнле шухăшлани çак пĕр-ик кун хушшинче паллă пулĕ, теççĕ. Анчах та октябрĕн 23-мĕшĕнче Леон Блюм «Попюлер» хаçатра çапла çырнă: социалистсем, коммунистсем тата «Халăхăн республикăллă юхăмĕ» пĕрлешсе пысăкрах пай пулса тăмалла, тăшмана хирĕç кĕрешнĕ нации совечĕн программи пулас правительствăн программи пулса тăмалла, тенĕ.

«Юманите» хаçатра Коньо çапла çырнă: Учредительнăй пухура коммунистсемпе социалистсем пĕрлешсе пысăкрах пай пулса тăмалла, çав пĕрлешĕве «Халăхăн республикăллă юхăмне» хутшăнтармалла мар, тенĕ.

«Халăхăн республикăллă юхăмне» ертсе пыракансен шухăшĕ ку тĕлĕшпе паллах мар-ха. Анчах та вĕсенчен пĕри — Морис Шуман — октябрĕн 23-мĕшĕнче çапла çырнă: парламентра «Халăхăн республикăллă юхăмĕпе» социалистсем пĕрлешсе пысăкрах пай пулса тăмалла, тенĕ.

## *Индо-Китайри лару-тăру*

**САЙГОН**, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Сайгон хулинчи радио çапла пĕлтерет: Индо-Китайăн кăнтăр пайĕнчи тĕрлĕ районсенче юлашки кунсенче Франци çарĕсемпе вырăнти халăх отрячĕсем хушшинче хĕçпăшалла тытăçусем пула-пула иртнĕ.

**САН-ФРАНЦИСКО**, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Франциско хулинчи радио çапла пĕлтернĕ: французсемпе акăлчансен Сайгон хулинчи (Индо-Китайăн тĕп хулинчи) командованийĕ пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре Сайгон районне французсен 2-мĕш çарĕн чаçĕсем анни çинчен каланă. Сайгон хулин хăшпĕр районĕсенче аннамитсен çарĕсем Англи салтакĕсемпе çаплах çапăçаççĕ. Союзниксен командованийĕ аннамитсен çарĕсене тупăсемпе пеме пуçланă.

### ИНДОКИТАЕЦСЕН ОРГАНИЗАЦИЙНЕ САЛАТСА ЯНИ ÇИНЧЕН ФРАНЦИРИ ХАÇАТСЕМ ПĔЛТЕРНИ

**ПАРИЖ**, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Франци правительстви Францире пурăнакан индокитаецсен организацине салатса ярасси çинчен пĕлтернĕ. Çав организаци 25.000 индокитаецпа, нуринчен ытларах аннамитсене пĕрлештерсе тăнă. Вĕсене Францине 1939 çулта, вăрçă пуçланнă хыççăн, тĕрлĕ ĕç тума илсе килнĕ пулнă. Организацие салата яриччченех, октябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче, çав организацин исполнительнăй комитечĕн пур руководителĕсене те арестленĕ.

Франци влаçĕн çак ĕçне тĕрлĕрен организацисемпе хаçатсем хытă хирĕçленĕ. Ĕç конфедерацийĕ пичетлесе кăларнă заявленире çапла каланă: «Индо-Китайри ĕççыннисене арестленине хирĕç Ĕç конфедерацийĕн бюровĕ питĕ хытă протест тăвать. Вĕсем Франци правительстви хăй панă обязательствăна пурнăçа кĕртме ыйтнăшăн çеç «айăпла». Ĕç конфедерацийĕн бюровĕ арестленĕ индокитаецсене халех ирĕке кăларма ыйтать».

«Фран тирер» хаçатра çапла çырнă: Индо-Китай патриочĕсене хирĕç поход пуçласа яни трестсене, пуринчен ытларах «Индо-Китай банкне» тата «Креди Индюстриэль э Коммерсьяль» трестне, Мотилан çемьипе çыхăнса тăраканĕсене, усă парать. Çав трестсене «Тонкинри кăмрăк компанийĕ» тата ытти компанисем те пăхăнса тăраççĕ.

«Сите Суар» хаçат та çавăн пекех çырать: «Франципе Индо-Китай хушшинчи ĕçсемшĕн ответлă çынсене—каучук королĕсене, «çĕр çинче рай» туса наракан усламçăсене—алкогольпе опиум сутакансене айăпласа суда пама юрать».

## Чойбалсан маршал патĕнче Китай республикин представителĕ Ли Фа-чжан ячĕпе пулса иртнĕ апатлану

**УЛАН-БАТОР**, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 23-мĕшĕнче Чойбалсан маршал патĕнче Ли Фа-чжан ячĕпе апатлану пулса иртнĕ. Ли Фа-чжан вăл Китайăн нации правительствин уполномоченнăйĕ пулса, Монголи Халăх Республикине унта плебисцит мĕнле иртнине сăнаса тăма пынă. Апатланура çаксем пулнă: Ли Фа-чжан тата унпа пĕрле килнĕ çынсем, Монголи Халăх Республикин Кĕçĕн хурал президиумĕн председателĕ Бумапеиде, Совет Союзĕн Монголи Халăх Республикинчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ Иванов юлташ, Монголи Халăх Республикин правительствин членĕсем, Монголири наука, искусство тата литература деятелĕсем.

Апатлану туслăн иртнĕ. Апатлану хыççăн хăнасем валли концерт пулнă. Концерта Монголи Халăх Республикин искусство работникĕсем хутшăннă.

### ГОМИНДАНПА КИТАЙРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔ ХУШШИНЧИ КАЛАÇУСЕМ ÇĔНĔРЕН ПУÇЛАНСА КАЙНĂ

**ЧУНЦИН**, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Сантрал Ньюс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 21-мĕшĕнче Гоминданпа Китайри коммунистсен партийĕ хушшинчи калаçусем çĕнĕрен пуçланса кайнă. Калаçусене çаксем хутшăннă: Чжан Фжунь, Ван Ши-пзе, Шао Ли-дзы, Чжоу Энь-лай тата Ван Жо-фей.

## *Англири муниципалитетсене суйлас умĕн*

**ЛОНДОН**, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Çичĕ çул, нумай çĕрте унтан та ытларах вăхăт иртнĕ хыççăн, Англире, Шотландире тата Уэльсра вырăнти 2.000 муниципалитет советне яхăн суйламалла. Ноябрĕн 1-мĕшĕнче Лондон графствинче тата Англипе Уэльсăн ытти районĕсенчи районри муниципалитетсене суйлаççĕ.

Ахаль условисенче столица районĕсенчи пĕтĕм муниципалитет советне кашни виçĕ çул хушшинче пĕрре суйламалла (муниципалитет совечĕн пĕр йышши членĕсене—олдерменсене çеç суйламаççĕ, вĕсем парламентри çÿлти палата пек шутланса тăраççĕ). Олдерменсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ кашни çулах вырăнтан тухать, вĕсем вырăнне çĕнĕ çынсене суйлаççĕ. Провинцисенчи районсен советникĕсем виçĕ пайран пĕр пайĕ вырăнтан тухаççĕ. Анчах та кăçал çак районсенче те советниксен виçĕ пайĕнчен пĕр пайне çеç мар, тата вăрçă вăхăтĕнче кооптани йĕркипе кĕртнĕ советниксем вырăнне те урăх çынсене суйламалла. Графствăсенчи муниципалитет совечĕсене илсен, правила тăрăх, вĕсен мĕнпур составне икĕ çул иртнĕ хыççăн суйламалла. Хăшпĕр округри муниципалитет совечĕсене те çавăн пекех суйлаççĕ; тепĕр округсенче вара совет составĕн виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ кашни çулах вырăнтан тухать те вĕсем вырăнне çĕнĕ çынсем суйлаççĕ.

Англи парламентне суйланă чухнехи пекех, муниципалитетсене суйланă чухне те çĕршыври тĕп кĕрешÿ лейбористсемпе консерваторсен партийĕсем хушшинче пулать. Ку таранччен муниципалитет совечĕсенче консерваторсем пуçпулса тăнă. Пĕр Лондон графствинчи муниципалитет совечĕсенче тата 17 районри муниципалитет совечĕсенче çеç лейбористсем ытларах вырăн йышăннă. Лондонри 28 район муниципалитетĕнчи 1.377 вырăна лейбористсен партийĕ — 1.338 кандидат, консерваторсем—1.070 кандидат, коммунистсен партийĕ—70 кандидат, либералсем—45 кандидат тăратнă.

### ОБЩИНАСЕН ПАЛАТИНЕ АНГЛИ БЮДЖЕТНЕ ПĂХСА ТУХМА ТĂРАТНИ

**ЛОНДОН**, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, финанс министрĕ Дальтон общинăсен палатинче çапла каланă: Англин вăрçă хыççăнхи малтанхи бюджечĕ çак çитес 6 уйăх хушшинче халăха çăмăллăх параймасть-ха. Вăрçă вăхăтĕнче Англи халăхĕ, тĕнчери халăхпа танлаштарсан, чи пысăк налог тÿлесе тăчĕ. 1946 çулхи апрель уйăхĕпчен пуçласа подоходнăй налога кашни кĕренке стерлинг пуçне пĕр шиллинг чакараççĕ. 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа усламран илекен налога та 60 процент чухлĕ чакармалла. Дальтон çапла каланă: укçа ытлашши йÿнелсе ан кайтăр тесе, налог хисеппе вăрахăн чакарса пымалла. Анчах та 1946 çулхи апрель уйăхĕ тĕлне ку ыйту лайăхрах паларакан пулать, çавăнпа та ун чухне вара çĕнĕ сĕнÿсем пама май килĕ.

### АНГЛИРИ ДОКЕРСЕН ЗАБАСТОВКИ

**ЛОНДОН**, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англири докерсен забастовки малалла пырать. Профсоюз организацийĕсен представителĕсемпе предпринимательсем калаçнинчен нимĕн те тухман. Октябрĕн 23-мĕшĕнче 4.500 салтак портсенчи судносене пушатнă. Лондон портĕнче 70 судно пушатасса кĕтсе тăраççĕ.

### ДЕ-ВАЛЕР АНГЛИ ÇАРĔНЧЕ ПУЛНĂ ИРЛАНДЕЦСЕНЕ АЙĂПЛАМА ХУШНĂ

**ЛОНДОН**, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Эйре премьер-министрĕ де-Валер 4000 çынна айăплама приказ панă. Çав çынсем Эйре çарĕнчен «тарса» Англи çарне служба кĕнĕ пулнă. Приказ тăрăх, çав çынсене çичĕ çул хушши Эйрери государство службине ĕçе илмелле мар, вĕсем ĕçсĕр тăрса юлсан, пулăшу илме те пултараймаççĕ, çавăн пекех тата государство тÿлекен нимĕнле ĕçре те ĕçлеме пултараймаççĕ.

# Кунта калаçма юратаççĕ

Октябрьски районри «Ударник» колхозра (председателĕ Медяков юлташ) кашни эрнерех правлени членĕсен ларăвĕсем пулса иртеççĕ. Çак ларусенче час-часах хĕле хатĕрленесси çинчен калаçаççĕ. Калаçаççĕ те ирттерсе яраççĕ, хĕле хатĕрленес пирки нимĕн те тумаççĕ.

Çамрăк выльăхсем валли ăшă витесем тума çураки пĕтсенех тытăннă, анчах ку тарана çитсе те унăн тăррине витмен, алăкĕсемпе кантăкĕсем хатĕр мар.

Вите тунă çĕрте ĕçлекенсем ĕçлесен те ĕçлемесен те кунне пĕр ĕçкунĕ илеççĕ, паллах, вĕсем васкамаççĕ, вите тăвас ĕçе вăраха ярса ĕçлемесĕрех ытларах ĕçкунĕ илме тăрăшаççĕ. Выльăхсем кăнтăрла та, çĕрле те сивĕ çĕрте тăраççĕ. Апла пулин те, выльăх-чĕрлĕх валли ăшă витесем хăвăртрах хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

**Ф. МЕДЯКОВ.**

### ГОСУДАРСТВĂНА АШ-КАКАЙ ПАРАÇÇĔ

**ЭЛĔК.** Районри колхозсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва анлăн хутшăнчĕç. Çак кунсенче 51 колхоз 1945 çулшăн государствăна аш-какай парса татрĕ. Халĕ чылай колхозсем 1946 çулшăн аш-какай параççĕ. Ехремкасси ял Советĕнчи «Труд» тата «Майăн 1-мĕшĕ» колхозсем çитес çулшăн государствăна аш-какай парса татнă.

**Ф. КАТЕЕВ.**

# ПРОФСОЮЗСЕН ÇЫВĂХРИ ЗАДАЧИСЕМ

Большевиксен партийĕ, совет государстви тата профессиллĕ союзсем ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе яланах тăрăшса ĕçленĕ. Отечественнăй вăрçăн йывăр кунĕсенче те пирĕн государство рабочисемпе служащисен кулленхи нушисемшĕн пĕрмаях тăрăшса пынă.

Паллах ĕнтĕ, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пынă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн государство пĕтĕм вăя тăшмана çĕнтерес ĕçе хунă. Рабочисемпе служащисем ун чухне вăхăта шутламасăр, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Хăйсен предприятийĕсемпе пĕрле хĕвелтухăçнелле куçса кайнă миллионшар ĕççыннисем пысăк йывăрлăхсем тÿссе ирттерчĕç. Анчах та вĕсем çав йывăрлăхсене парăнмарĕç, çĕнĕ вырăнта фронт панă заказсене вăхăтра туса парас тесе чыслăн ĕçлерĕç.

Пирĕн парти, государство, совет халăхĕн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ пирĕн халăх çĕнтерÿ тăвассишĕн тăрăшса ĕçленине тивĕçлипе хаклать. 1945 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕнче халăха чĕнсе каланă чух Сталин юлташ çакна палăртса хăварчĕ:

«Пирĕн Совет халăхĕ çĕнтерÿ тăвассишĕн вăйне те, ĕçне те шеллемерĕ. Эпир йывăр çулсем тÿссе ирттертĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ пирĕнтен кашниех: эпир çĕнтертĕмĕр, тесе калама пултарать. Паянтан пуçласа эпир хамăрăн Тăван çĕршыва хĕвеланăçĕнчен нимĕçсем килсе тапăнас тата хĕвелтухăçĕнчен японецсем килсе тапăнас хăрушлăхран хăтартăмăр, тесе калама пултаратпăр. Пĕтĕм тĕнче нумай вăхăт хушши кĕтнĕ мир килсе çитрĕ».

Паллах ĕнтĕ, мирлĕ тапхăр пуçланни рабочисемпе служащисен ĕç условийĕсене лайăхлатмалли, йăлапа культура ĕçне лайăхлатмалли условисем туса парать. Профсоюз организацийĕсен çав майсемпе туллинрех усă курас пулать. Рабочисемпе служащисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе хисеплĕ задача илнĕ профсоюзсен халĕ хăйсен ĕçне тата ытларах вăйлатас пулать.

Вăрçă вăхăтĕнче рабочисем çĕрне-кунне пăхмасăр ĕçлени паллă ĕнтĕ. Рабочисем фронта тухса кайнине пула ĕç вăйĕ сахалланнине кура правительство законпа пăхнă вăхăтран ытларах ĕçлеме ирĕк панă, рабочисемпе служащисене отпусксем пама чарнă, фронт валли васкавлă заказсене тăвакан заводсенче час-часах канмалли кунсенче те ĕçленĕ.

Халĕ, нимĕçпе Япони захватчикĕсене вăрçăра çĕнтернĕ хыççăн, пирĕн фабрикăсем, шахтăсемпе рудниксем яланхи ĕç кунĕ çине куçаççĕ. Паллах ĕнтĕ, вăл ĕçе тĕплĕн туса ирттермелле. Яланхи ĕç кунĕ çине куçса предприятисен продукци туса кăларас ĕçе чакармалла мар, ÿстерсе пымалла. Çавăн пекех ĕç тухăçлăхне те пĕрмаях ÿстерсе пымалла. Çакăна тума рабочисен квалификацине ÿстермелле, производствăри ситменлĕхсене пĕтермелле, производство технологине аванлатмалла. Профсоюз организацийĕсен предприяти мирлĕ аталану тапхăрне мĕнле куçса пынине контроллесе пымалла. 8 сехетлĕ ĕç кунĕнче те рабочисене вăрçă вăхăтĕнчи чухлех продукци туса кăларма тивĕçлĕ условисем туса памалла.

Ĕç тухăçлăхне тăтăшах ÿстерсе пыни ĕçхалăхĕн пурнăçпа йăла условийĕсем лайăхланса пырассин чи кирлĕ условийĕ пулса тăрать.

Промышленноçра ĕç тухăçлăхне ÿстерни кулленхи кирлĕ таварсене ытларах туса кăларма май парать. Халăха кирлĕ таварсене ытларах туса кăларас тĕлĕшпе совет правительстви чылай решенисем йышăнчĕ. Самахран, халăха кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе оборона промышленноçĕ те ытларах та ытларах ĕçлеме пуçлать. Авиаци промышленноçĕ кăна октябрь — декабрь уйăхĕсенче 25.000 велосипед, 4.000.000 тĕрлĕ сават-сапа, 20.000 примус, 30.000 мясорубка, 40.000 кровать, 25.000 чейникпе кофейник тата ытти тĕрлĕ япаласем те туса кăларма хатĕрленет. Халăха куллен кирлĕ япаласем ытларах туса кăларас ĕçе пулăшасси профсоюзсен чыслă тивĕçĕ пулса тăрать.

Ĕç тухăçлăхĕ ÿссе пыни рабочисемпе служащисен ĕç укçи хăпарассипе тÿрремĕнех çыхăнса тăрать. Çавăн пирки те профсоюзсен тĕрлĕ простойсемпе хытă кĕрешмелле, ĕç вăхăтне усăсăр ирттернине пĕтерме пулăшмалла, рабочисемпе служащисен ĕç укçине ÿстерме чăрмантаракан производствăри ситменлĕхсене пĕтерсе пырассишĕн кĕрешмелле.

8 сехетлĕ ĕç кунĕ çине куçнипе, канмалли кунсемпе отпусксем тепĕр хут памалла тунипе ĕççыннисен культурăллă канма, общество ĕçне хутшăнма тата харпăрхăй пĕлÿне ÿстерес тĕлĕшпе вĕренсе пыма пушă вăхăт ытларах пулать. Çавăн пирки те хальхи вăхăтра клубсен, театрсен, киносен, библиотекăсен ĕçĕсем çав тери паха вырăна тухса тăраççĕ. Çавăн йышши учрежденисенчен нумайĕшĕ вăрçă вăхăтĕнче те хăйсен ĕçне пăрахман, анчах хăшпĕр клубсем, стадионсем вăрçă вăхăтĕнче хăйсен ĕçне кирлĕ пек туса пыраймаи. Вĕсен нÿлĕмĕсене ытти организацисене пани те пулнă.

Культура учрежденийĕсене нумайĕшне нимĕç аркатусисем пĕтĕлтерсе хăварнă. Халĕ тăшман сиенленĕ культура çуртсемпе клубсене юсаççĕ, çĕнĕрен тăваççĕ.

Ĕçхалăхĕн пурнăçне лайăхлатас ĕçре пурăнмалли çуртйĕрсем çĕнĕрен туни те паллă вырăн йышанса тăрать. Вăрçă вăхăтĕнче пурăнмалли çуртйĕрсене пысăк сиен кунĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем 1.710 хулана пĕтĕмĕшпех аркатса е сиенлесе çав тери усал ĕç турĕç.

Халăх хуçалăхне аталантармалли пилĕкçуллăх планĕнче пурăнмалли çуртйĕр тăвас ĕç çине кирлĕ пек çаварăнса пăхнă. Самахран, Горькири Молотов ячĕпе тăракан автомобиль заводĕнче кăна çитес 5 çул хушшинче 115.000 тăваткал метр пурăнмалли çуртсем тума палăртса хунă.

Çĕнĕрен тăвакан е юсакан çуртсене Хĕрлĕ Çартан таврăннă çынсене, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене, фронтра вилнĕ воинсен çемьисене чи малтан вырнаçтарма кирлине профсоюз организацийĕсен яланах асра тытса тăмалла.

Халăхăн пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатасси обществăллă апатлану ĕçне йĕркеленинчен те пит нумай килет. Суту-илÿпе обществăллă апатлану ĕçĕнче ĕçлекенсене пĕрлештерсе тăракан профсоюз организацийĕсен столовăйсем, закусочнăйсем, кафесем ытларах уçма тăрăшмалла. Профсоюзсен халĕ те, мирлĕ аталану тапхăрĕнче, рабочи снабженийĕпе ĕçлекен ОРС-семпе ытти органсен ĕçне контроллесе тăмалли çинчен манмалла мар.

Вăрçă пирĕн çĕнтерÿпе пĕтнĕ хыççăн ĕçхалăхĕн пурнăçĕпе йăла условийĕсене лайăхлатмалли анлă майсем çĕнĕрен уçăлаççĕ. Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ ертсе пынипе пирĕн халăх кĕрешсе илнĕ мир ырлăхĕпе туллин усă курма, çав майсемпе усă курса ĕççыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатма профсоюзсен ытларах тăрăшмалла.

**Е. СИДОРЕНКО.**
**ВЦСПС секретарĕ.**

## *Голланди Индийĕнчи лару-тăру*

**ДЕЛИ**, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Дели хулинчи радио Юнайтед пресс агентстви Батавирен панă хыпара пĕлтерет: Ява утравĕ çинчи лару-тăру сивĕчленнĕçемĕн сивĕчленсе пырать. Кунта Индонези правительстви (ăна Сойкарно доктор ертсе пырать) туса хунă çарсемпе Голланди çарĕсем хушшинче тытăçусем вăйланнăçемĕн вăйлăланса пыраççĕ, вĕсем нуринчен те ытларах çав утравăн хĕвелтухăç пайĕнче вăйлăланса пыраççĕ.

**САН-ФРАНЦИСКО**, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Франциско хулинчи радио çапла пĕлтерет: илнĕ хыпарсем тăрăх, Индонезире Голланди управленине хирĕç пыракан восстани Ява утравĕ çинчен Суматра утравĕ çине куçнă.

**САН-ФРАНЦИСКО**, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Франциско хулинчи радио, Ява утравĕн Батави ятлă тĕп хулинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, çапла пĕлтерет: Батави хулинче халĕ лăпкă, анчах та хула урамĕсенче союзниксен салтакĕсем хуралласа çÿреççĕ. Ява утравĕ çинчи восстани чарăнман-ха. Восстание ертсе пыракансем Сурабайя хулинчи радио тăрăх халăха чĕнсе каланă, вĕсем халăха восстани тăвакансемпе пĕрлешме чĕннĕ. Сурабайя хули восстани тăвакансен аллинче. Восстание ертсе пыракансем Голландин Батавири влаçĕсене халех çав хуларан тухса кайма хушнă. Восстание ертсе пыракан Сойкарно çапла каланă: Ява пĕтĕмĕшпех восстани тăвакансен аллинче. Восстани питĕ хăвăрттăн саралса пырать, ĕнтĕ Суматра утравĕ çинче те Ява утравĕ хыççăн каясси курăнса тăрать.

### ТРИЕСТРИ ĔÇÇЫННИСЕН ДЕМОНСТРАЦИЙĔ

**БЕЛГРАД**, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Белград хулинчи радио çапла пĕлтерет: иртнĕ вырсарникун Триестри ĕççыннисем тата хула тавралăхĕнчи халăх питĕ пысăк демонстраци туса ирттернĕ. Демонстрацире 50.000 çын ытла пулнă. Рабочисемпе служащисем тата çамрăксем Югослави, Словени тата Итали ялавĕсемпе плакачĕсене çĕклесе пынă. Плакатсем çине çапла çырнă: «Словенсемпе итальянецсем пĕр-пĕрне тăвансем пек пулса алă параççĕ». «Федерациллĕ Югославири автономиллĕ Триест сывă пултăр!»

Митинга Югославин çар управленийĕ территорийĕнчи предприятисенче ĕçлекен рабочисен, шахтерсен тата строительсен ушкăнĕ пынă. Демонстрацие пухăннă халăх вĕсене алă çупса йышăннă.

### ГИТЛЕРЛА ПАРТИН ВĂРТТĂН ЧЛЕНĔСЕН СПИСОКНЕ ТУПНĂ

**ЛОНДОН**, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, гитлерла партин вăрттăн членĕсем пулнă Англи гражданĕсен пĕтĕм списокне тупнă. «Гитлер çапла шутланă,—тесе çырать корреспондент,—Германи çарĕсем Англие йышăнса илнĕ пулсан, çав çынсем ăна Англие тытса тăма пулăшмалла пулнă».

### КВИСЛИНГА ВĔЛЕРНĔ

**ОСЛО**, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 23-мĕшĕнче Норвеги королĕ Квислингăн хăйне касарма ыйтса çырнă заявленине хапăл туман. Вара октябрĕн 24-мĕшĕнче ирхине Квислинга Осло хули çывăхĕнчи Акерсхус ятлă тинĕс крепоçĕнче персе вăрахнă.

### ТИТО МАРШАЛ ЮГОСЛАВИРЕ ПУРĂНАКАН РУМЫНСЕН ДЕЛЕГАЦИНЕ ЙЫШĂННĂ

**БЕЛГРАД**, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Югославири радио çапла пĕлтерет: Белграда валахсен (Югославире пурăнакан румынсен) делегацийĕ пынă. Делегатсене Тито маршал йышăннă. Делегатсем Тито маршала Тимок шывĕ тăрăхĕнчи румынхалăхĕнчен нухнă парнене панă. Тито маршал делегатсемпе пĕр сехет ытла калаçнă, вĕсен экономикăллă тата политикăллă пурнăçĕпе интересленнĕ. Делегатсем халăхăн нушисем çинчен каласа панă, çĕршыва чечеклентерес тесе хăйсен мĕнпур вăйне хурса ĕçлеме сăмах панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00064. Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.